25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
СЕНТЯБРЬ
9
ЮНКУН
210(6145) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

МТС-сен политотделĕсем тăрат нă тăрăх, тракторсемпе тата комбайнсемпе ĕçлесе пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнăшăн, ялхуçалăхĕнче малта пыраканосен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

54. Çĕмĕрле МТС-ĕнчи трактористт Курочкин. Вăл Т—2—Г маркăллă тракторпа хăйĕн сменинче 450 гектар ĕçленĕ, планпа 306 гектар кăтартса панă пулнă.

55. Йĕпреç МТС-ĕнчи комбайнер Маркиянов. Вăл комбайнпа 196 гектар çинчи тырра вырса пуçтарнă.

56. Куславкка МТС-ĕнчи комбайнер А. Т. Сиверцов. Вăл комбайнпа августăн 27-мĕш тĕлне 235 гектар çинчи тырра вырса пуçтарнă.

Хуласем валли вутă хатĕрлесси—пысăк ĕç

Гитлерла Германие хирĕç çапăçмашкăн тăван Хĕрлĕ Çара ытларах та ытларах хĕçпăшалсем, боеприпассем, тăхăнмалли тата çимелли япаласем кирлĕ. Фронт социализмлă промышленноçпа ялхуçалăхĕнчен хăйне мĕн кирлине çителĕклĕ тата вăхăтра парса тăма ыйтать. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене ăнăçлăн сирсе пырса, пирĕн промышленность фронтпа çĕршыв валли кунран кун нумайрах продукци туса кăларать.

Анчах фабрикăсемпе заводсем, артельсемпе мастерскойсем татах та тухăçлăрах ĕçлечĕр тесен, паянхи кунпа çеç мар, ыранхи кунпа та тĕрĕшес пулать. Сăмах хĕле кĕме хатĕрленесси çинчен пырать.

Чи малтанах предприятисем, электростанцисем, чугунçулсем тата пурăнакан çынсем валли хĕл каçма кирлĕ чухлех топливо хатĕрлемелле. Фабрикăсемпе заводсен, паровозсемпе локомотивсен кĕрлевне хăллехи ĕçĕсен ăнăçлăхĕ топливо çителĕклинчен килет. Топливо — промышленноçпа транспортăн çимĕçĕ.

Халĕ вăрçă вăхăтĕнче топливăна ытти çĕртен кÿрсе килессе кĕтсе лармалла мар, вырăнтах хатĕрлес пулать. Пирĕн Чăваш республикинче вырăнти топливо нумай, торфпа вутă калани районрах пур. Вĕсене хатĕрлессишĕн тĕрăшни, вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхпа ĕçлени çеç кирлĕ.

Анчах республикăра хуласем валли топливо хатĕрлес ĕçе çителĕклĕ тулса пырать тесе калама çук-ха. Торф кăлармалли сезон иртсе пулин те, Чăваш АССР Совнаркомĕ торф хатĕрлес тĕлĕшпе панă плана 55 процент çеç тултарнă. Кăçалхи сезонра уйрăмах Атăл леçĕнчи торф предприятийĕ начар ĕçлерĕ. Ĕçе кая юлса тытăнса тата хĕрÿ вăхăтра сÿрĕккĕн ĕçлесе, торф хатĕрлес задание çурри чухлĕ те пурнăçламарĕ. Предприяти руководителĕсем, директор Воронцовпа главнăй инженер Голубев юлташсем, Шупашкар хулине çителĕклĕ таран торф хатĕрлесе паманнишĕн ответ тытма тивĕçлĕ.

Çав вăхăтрах ĕçе кирлĕ пек организациленĕ, рабочисем хушшинче социализмлă ăмăртупа стахановла движение анлăн сарса пынă тата хăйсен задачисене тĕплĕн ăнланса ĕçленĕ Çĕмĕрлери, Етĕрнери тата Елчĕкри предприятисем сезонри плана срокчен тата ытлапипех тултарчĕç.

Çанталăк лайăх тăнă май, торф хатĕрлемелли кăçалхи сезона малалла тăснă. Халĕ калани кунпа, калани сехетпе туллин усă курас пулать. Çăмăрлă кунсем пуçланиччен татах та çĕршер тонна торф кăлармалли май пур. Уйрăмах торфа типĕтес тата пуçтарас ĕçсене кая хăварма юрамасть. Торфа типĕтмесĕр, чĕрĕ халĕнех хăваракан руководитель çĕршыв умĕнче айăпа кĕрет.

Хутмалли япаласенчен уйрăмах вутă хатĕрлес ĕç анлăн пулса пымалла. Мĕншĕн тесен пирĕн фабрикăсемпе заводсене, шкулсемпе больницăсене ытларах вутăпа ăшăтма тивет.

Вăрçă вăхăтне пула вутă хатĕрлесси — хула çыннисен хăйсен ĕçĕ пулса тăчĕ. Вăрман хатĕрлекен организацисем кирлĕрех ĕçпе — фронт нушисене тивĕçтерес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Çак хĕрÿ вăхăтра тылри патриотсем хăйсене кирлĕ вутта хăйсемех хатĕрлеççĕ. Малта пыракан коллективсем хĕл каçма кирлĕ чухлех вутă хатĕрлерĕç те ĕнтĕ. Шупашкарти больницăн, маляри станцийĕн, ача çуралмалли çуртăн тата фармацевтика шкулĕн коллективĕсем хăйсене валли вутă хатĕрлес задание ытлашшипех тултарнă.

Анчах пысăкрах заводсемпе фабрикăсем валли, вĕсенче ĕçлекен рабочисемпе служащисем валли вутă хатĕрлес ĕç юлса пырать-ха. Канашри вагонсем юсакан заводран вутă хатĕрлевĕнче, ĕçлемелли çынсен хисепĕнчен виççĕмĕш пайĕ çеç ĕçлет. Куславккари, Çĕмĕрлери комбинатсем, Улатăрти паровозсем юсакан завод, республикăри ытти чылай предприятисем вутă хатĕрлес ĕçе кая юлса тытăнчĕç. Шупашкар хули валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе Чăваш АССР Совнаркомĕ панă плана сентябрĕн 1-мĕш тĕлне 62 процент çеç тултарнă. Улатăр, Çĕмĕрле, Канаш тата ытти хуласенче çак ĕç çителĕклĕ хăвăртлăхпа пулса пымасть. Вырăнти топливо промышленноçĕн Управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх, хуласем валли III-мĕш кварталта вутă хатĕрлес задание Улатăр леспромхозĕ 7,8 процент, Çĕмĕрле леспромхозĕ 13,4 процент, Сĕнтĕрвăрри леспромхозĕ 11,6 процент çеç пурнăçланă.

Предприятисен, учрежденисен тата обществăллă организацисен руководителĕсен задачи — вутă хатĕрлевне ĕç вăйĕ çителĕклĕ таран уйăрса парасси пулать. Вăрман хатĕрлекен организацисен ĕçлеме пынă хула çыннисене нормăна ирттерсе тултарма кирлĕ майсене туса памалла, вĕсен пурнăçпа йăла условисемшĕн тăрăшмалла. Вутă валли государство уйăрнă средствăсемпе тата фондсемпе тĕрĕс усă курмалла.

Топливо хатĕрлесси — çур ĕç, хатĕрленĕ топливăна вăхăтра турттарса тухас пулать. Вутăпа торфа предприятисемпе учрежденисен склачĕсене çитерсен çеç топливо хатĕр теме пултаратпăр. Анчах халыхи вăхăтра топливăна потребительсем патне çитересси питех те вăраххăн пулса пырать-ха. Атăл леçĕнчи торф предприятийĕ хатĕрленĕ топливăна Шупашкар хулине нимĕн чухлĕ те кÿрсе каçман. Çĕмĕрле хулинче те торфа турттарма васкани çук.

Вутта турттарас ĕçĕн хăвăртлăхĕсем те пачах çителĕксĕр. Леспромхозсем виççĕмĕш кварталта вутă турттарас плана 19 процент çеç тултарнă. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Шăмăршă, Шупашкар леспромхозĕсем юлса пыраççĕ. Вĕсен руководителĕсем турттарас ĕç çине çителĕксĕр çаврăнса пăхаççĕ.

Вăрман хатĕрлекен организацисен руководителĕсен турттарас енĕпе вăйлăнрах ĕçлемелле, мĕнпур ĕç вăйĕпе, транспортпа тата механизмсемпе туллин усă курмалла, пуçарулăхпа тавçăрулăха ытларах кăтартмалла. Халĕ çанталăк уяр тăнă чух вутта турттарса тухас хăвăртлăхсене кунран кун ÿстерсе пымалла.

Çак ĕçре хуласемпе районсенчи партипе совет организацисен леспромхозсене тивĕçлипе пулăшмалла, ĕç вăйне, транспорт средствисене вăхăтра тата çителĕклĕ уйăрса памалла.

Предприятисемпе учрежденисен руководителĕсен хĕле кĕме хатĕрленес ĕçĕн тепĕр енĕ çинчен — çуртсене юсасси, ăшă тытмалла тăвасси тата вутта перекетлесси çинчен манма юрамасть. Перекетлĕх — пирĕн пурнăçăн законĕ, халыхи вăхăтра вăл татах та пысăк вырăн йышăнса тăрать. Кăçал топливăпа усă курмалли çирĕп норма тăвас пулать, кочегарсене, истопниксене лайăх вĕрентсе хатĕрлес пулать, торфа, вутта перекетлĕн тыткалакансене хавхалантарса пырас пулать.

Пирĕн хуласемпе рабочисем пурăнакан поселоксене хĕле кĕме хатĕрлесси — халыхи вăхăтри питех те кирлĕ хуçалăхлă-политикăллă ĕç.

Иран посолне М. Ахи господина В. М. Молотов юлташ йышăнни

Сентябрĕн 7-мĕшĕнче Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Иранăн Совет Союзĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй çĕнĕ посолне М. Ахи господина йышăннă.

Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх

Малтисемпе танлашмалла

КАЛИНИНО, сентябрĕн 8-мĕш. (Телефонпа). Районри чылай колхозсем, тырпулсене уйхиртен пуçтарса кĕртес тĕлĕшпе фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăха хутшăнса, паллă ĕçсем турĕç. Ишлейри «Комбайн» колхоз вунăкунлăха хутшăннăранпа 116 гектар çинчи кĕлтесене уйхиртен кĕртсе, сентябрĕн 7-мĕшĕнче çапса пĕтерчĕ.

Колхозра авăн çапас ĕçсене хăвăртрах вĕçлес кăмăлпа хавхаланнă колхозниксем фронтри боецсем пек хастарлăн ĕçлерĕç. Уйран итем çине кĕлте кÿрсе тăракан М. Тимофеева, А. Порфирьева, А. Романова тата ытти колхозницăсем хăйсен ĕç нормине куллен 200—300-шер процент тултарса пынă.

Çавăн пекех Мăнъялти «Трактор» колхоз членĕсем те кĕлтесене капана хывас тĕлĕшпе маттур ĕçленĕ. Сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа паянхи куна çити колхозниксем 247 гектар çинчи кĕлтесене кÿрсе капана хывса пĕтерчĕç. Мачамăшри колхоз колхозникĕсем 179 гектар çинчи кĕлтесене капана хывнă, 80 гектар çинчи тырпула çапнă. Çакăнпа пĕрлех 1,5 гектар кантăр татнă, 20 гектар хăмăл сухаланă.

Çак вăхăтрах районра уйхир ĕçĕсене вĕçлес тĕлĕшпе япăх ĕçлекен колхозсем те пур-ха. Сăкăтри Буденный ячĕпе тăракан колхоз тырпулсене вырса пуçтарас тĕлĕшпе чăтма çук начар ĕçлет. Колхозра ĕçе кирлĕ пек организацилемен. Колхозниксем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе йĕркелемен. А. Яковлева юлташ ертсе пыракан бригадăра чылай колхозниксем хăйсен ĕç нормисене тултарса пыраймаççĕ. Бригадăри колхозниксем халь виççĕмĕш пусăра сĕлĕ çулаççĕ. Анчах та вĕсен ĕç пахалăхĕ те, тухăçлăхĕ те питĕ начар. Бригадир ĕçре ертсе пымасть, колхозниксем ĕçленĕ çĕрте питĕ сахал пулать. Вăл куллен кам мĕн чухлĕ тыра вырнине те, мĕн чухлĕ ĕçкунĕ ĕçлесе илнине те пĕлмест. Колхоз председателĕ Н. Герасимов колхозри бригадăсем мĕнле ĕçленипе интересленмен, вăл хăш бригада мĕн чухлĕ тырă вырса пуçтарнине пĕлмест. Колхоз руководителĕсен тимсĕрлĕхне пула 7-мĕш пусăра пĕр гектар ыраша вырмасăр хăварнă. Ăна икĕ эрне иртсен çеç пĕлнĕ. Тырă нумай вăхăт ларнипе чылай тăкаланнă.

Çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе Буденный ячĕпе тăракан колхоз руководителĕсен çине тăрсах ĕçлемелле.

Г. МАТВЕЕВ.

Вăрçă инвалиĉĕсем колхозра тăрăшса ĕçлеççĕ

КУКЕÇ. Отечественнăй аслă вăрçăран аманса таврăннă инвалидсем колхоз производствинче тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсенчен чылайĕшне ертсе пыракан ĕçсене лартнă. М. Николаев—«Первое мая» колхозăн председателĕ, П. Скворцов—Сарапакассинчи колхоз председателĕ пулса ĕçлеççĕ. С. Федоровпа Е. Леонтьев юлташсем—Водопьянов ячĕпе тăракан колхозра, М. Демьянов—«Память Ленина» колхозра, И. Гончаров—«Чуваш. ЦИК» колхозра бригадирсем. Вĕсем колхозниксем шанса панă тивĕçе тÿррĕн пурнăçлаççĕ, хăйсен ĕçне пĕтĕм чĕререн тăрăшса туса пыраççĕ.

«Первое мая» колхоз Николаев юлташ председательре ĕçлеме пуçличчен юлса пынă. Унта ĕç дисциплини сÿрĕк пулнă. Çĕнĕ председатель колхозри ĕçе вăйлатрĕ, ĕç дисциплинине çирĕплетрĕ. Уборкăри ĕçсене колхоз ăнăçлăн вĕçлет. Водопьянов ячĕпе тăракан колхозра С. Федоров юлташ ертсе пыракан бригада пур ĕçсенче те малта пырать.

Т. ЛОГИНОВ.

Кĕлтене капана хывнă

ШĂХАСАН, сентябрĕн 8-мĕш. (Хамăр корр.). Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхоз çуртырпусене пĕтĕмĕшпех вырса пĕтерчĕ. Халĕ колхозра кĕлтесене капана хывас, авăн çапас, çĕрулми кăларас ĕçсем хĕрÿллĕн пыраççĕ.

Колхозри пĕрремĕш бригада (бригадирĕ коммунист В. Степанова юлташ) 58 гектар çинчен ыраш тата çуртырри кĕлтисене кÿрсе капана хывнă, вăл шутран 50 процентне çапса амбара кĕртнĕ. Авăн çапнă çĕрте колхозниксем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Куллен 40 çын (ку шута подростоксем те кĕреççĕ) икĕ гектар ытла тырă çапаççĕ. Стахановкăсем А. Яковлева, М. Федорова, куллен 0,70-шер гектар тырă вырнăскерсем, халĕ авăн çапнă çĕрте ик-виçĕ норма тултараççĕ.

Бригада кĕрхи ака планне те ăнăçлăн пурнăçларĕ, халĕ кĕрхи çĕртме сухи тăвас тĕлĕшпе те начар мар ĕçлет.

Кĕлтесене алăпа çĕклесе капана хываççĕ

ЭЛĔК, сентябрĕн 8-мĕш. (Телефонпа). Мăн Вылăри «Красная заря» колхоз ыраш кĕлтисене капана хывса пĕтерчĕ. Вырса пуçтарнă ырашăн 50 процентне çапса пуçтарнă.

Колхозра кĕлтесене алăпа çĕклесе капана хывассине те авал йĕркеленĕ. Çак кунсенче колхоз активисчĕсем ку ĕçе хăйсем пуçарса ярса, 12 çын пĕр каçра 7 гектар çинчи кĕлтесене алăпа йăтса капана хыврĕç. Ку ĕçе ялсовет исполкомĕн председателĕ Кириллов, колхоз счетоводĕ Петров, учитель Теплов тата ыттисем те хутшăнчĕç.

С. САПЕРКИН.

25 гектар кĕрхи çĕртме тунă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, сентябрĕн 8-мĕш. (Телефонпа). Тырпулсене пухса кĕртес ĕçсене вĕçлемелли фронтовой вунăкунлăхра Медикассинчи «Вторая пятилетка» колхоз (колхоз председателĕ коммунист Я. Капитонов юлташ) паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет. Вăл çывăх кунсенчех уборка ĕçĕсене вĕçлет. Сентябрĕн 6-мĕш тĕлне колхоз кĕрхипе çурхи тырăсене капана хывса çитерчĕ. Ку ĕçре уйрăмах 67 çулти Яков Еремеев тăрăшса ĕçлерĕ. Вăл куллен 25 урапа кĕлтисене капана хывас вырăнне 50—55 урапа кĕлтисене капана хывса пычĕ.

Колхоз пăрçа-ясмăк культурисене çапса пуçтарчĕ, çак кунсенчех ыраш çапса пĕтерет. Çĕрулми кăларма тытăннă. Малтанхи кун кăларнă çĕрулмирен 15 центнер государствăна леçсе панă. Колхоз кунсăр пуçне государствăна тырă памалли пилĕккунлăхри графика ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Ĕнерхи кун тĕлне 25 гектар кĕрхи çĕртме тунă.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Государствăна тырă парса татрĕç

ВĂРНАР. Хĕвеланăç тата Калинин фрончĕсенче пирĕн войскăсем (пысăк çĕнтерÿ тунипе хавхаланнă ĕççыннисем тата ытларах тăрăшса ĕçлеме тытăнчĕç. Хаçатсем килсенех, Кĕçĕн Кипекри «Память Ленина» колхозри агитаторсем Совинформбюро пĕлтерĕвне колхозниксене вулаcа парĕç.

«Актив, тавăрттăр пирĕн ывăлсем тăшмана. Аманнисемшĕн те, вилнисемшĕн те тавăрмалла», тет колхозница Семенова. Вăл куллен нормăна виççĕшер хут ирттерсе тултарса ĕçлет. Колхозра çавăн пек ĕçлекенсем вунпарăн шутланаççĕ.

Районра государствăна тырă тăратас ĕç вăйланчĕ. Кушникри «Заря», Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене пĕрремĕшлĕ тырăсем парас енĕпе пĕтĕмпех пурнăçларĕç.

Çĕрпÿелĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозăн членĕсем те çĕнĕ тырра хăвăртрах çапса, государствăна тырă памалли задание ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕç.

Çавăн пекех юлашки вăхăтра Хĕрлĕ Çар фондне тырă хывас ĕç чылаях лайăхланчĕ.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

КОЛХОЗРИ АГИТАТОРСЕМ

ШĂХАСАН. (Телефонпа). Уйкас Кипекри Тельман ячĕпе тăракан колхозра агитаторсем ĕççыннисене отечественнăй вăрçă фрончĕсенче çапăçусем мĕнле пулса пыни çинчен каласа кăтартаççĕ, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене вуласа параççĕ, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опычĕсемпе паллаштараççĕ. Вĕсем уборка вăхăтĕнче колхозниксем хушшинче 63 калаçу ирттернĕ. Комсомолец Н. Семенов колхозниксене 23 хутчен хаçат вуласа панă. Агитатор Ефимова бригадăри стена хаçатне 9 номер кăларнă.

Колхозра малта пыракан бригадăсене пама куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялав тунă, стахановецсен ĕçĕсене палăртма Хисеп хăми пур.

Колхозниксем нумайĕшĕ ĕç нормисене ирттерсе тултарса пыраççĕ. Колхоз государствăна ыраш парса татнă, çавăн пекех хăяр, кишĕр, сухан панă.

В. ЯКОВЛЕВ.

Кĕрхи тырăсене планран ирттерсе акрĕç

ЙĔПРЕÇ. (Телефонпа). Кĕрхи тырăсене «Осоавиахим» колхоз планпа пăхнинчен 20 процент, Киров ячĕпе тăракан колхоз—5 процент ытларах акса хăварчĕç.

Д. МИХАЙЛОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 7-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Сентябрĕн 7-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç Сталинградран хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, çавăн пекех тата Новороссийск, Моздок районĕсенче хаяррăн çапăçнă.

Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сентябрĕн 6-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 20 танкне çити, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 8 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен складне тата горючи складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине 2 батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн авиаци противникăн 5.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Сталинградран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç хĕрÿллĕн çапăçнă. Н-ски чаçăн боецĕсем противникăн 4 атакине сирсе янă, унтан вара çĕнĕ позицисем патне чакнă. Тепĕр участокра нимĕçсен пехоти, 22 танк пулăшса пынипе, пирĕн позицисене атакăланă. Çав рубежа хÿтĕленĕ боецсемпе командирсем противникăн атакине сирсе янă. Нимĕçсен 2 танкне тата гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсем пысăк вăйсемпе темиçе хутчен атакăланă. Противника пысăк çухатусем тÿстерсе, каялла сирсе янă. Пĕр участокра нимĕçсен 30 танкĕ пирĕн артиллери батарейин позицийĕсене атакăланă. Совет боецĕсем, усă позицисенчен персе тăрса, тăшманăн атакине сирсе янă, нимĕçсен 8 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новороссийск районĕнче пирĕн чаçсем противникăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç вăйлăн çапăçнă. Пысăк çухатусем тÿссе тăшман пирĕн войскăсен çапăçу йĕркисен ăшне саваллана кĕме пултарнă. Н-ски чаçăн боецĕсем хаяр çапăçусенче пĕр кун хушшинче нимĕçсен 8 танкне тата 400 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллери 4 танк персе çĕмĕрнĕ, войскăсем турттарса пыракан 27 автомашинăна тата 2 оруди пĕтерсе тăкнă, противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, пысăк пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче юханшывăн кăнтăр енчи çыранĕнче çапăçнă. Пирĕн подразделени, сасартăк пырса çапса, противника халăх пурăнакан пĕр пунктран хĕссе кăларнă, артиллерин батарейине пĕтерсе тăкнă тата нимĕç чаçĕн штабне аркатса тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем кăнтăр еннелле наступлени тума хăтланнă гитлеровецсен группировкине пырса çапнă. Çав çапăçусенче 23 танк çухатсан, противник васкаса çурçĕрелле чакма тытăннă.

* * *

Вĕлернĕ нимĕç офицерĕ çумĕнче — Ганс Лудт артиллерист çумĕнче тупнă записной кĕнекерен хăшпĕр вырăнсене илсе пичетлетпĕр:

«Паян ирхине 7 сехетре Вязьмăна тухса кайрăмăр. Çунса кайнă поездсем чугунçулăн икĕ енĕпе йăванса выртаççĕ. Кунта авиаци лайăххăх ĕçленĕ.

..Эпир маршра. Чи хăрушши вăл — вырăс штурмовикĕсем, вĕсем 15 метр таран аяла анаççĕ те хăйсен тупписенчен переççĕ. Пирĕн маршевăй батальона çав самолетсем пысăк çухатусем тÿстерчĕç.

...Тĕлĕнмелле, фронт тăван çĕршыв çинчен ытла та сахал пĕлет-çке. Эпĕ çакна ĕненсе çитрĕм: парăнтарнă çĕршывсен халăхĕсем çеç мар, Германири халăхăн питĕ пысăк пайĕ те вăрçă пирки ывăнса çитнĕ. Вăрçă ĕçĕсем малалла та тăсăлсан мĕн пулса тăрĕши? Офицерсемпе салтаксем халь калаçнă чухне час-часах вырăс хĕлне аса илеççĕ. Татах тепĕр хут щĕлма, вырăс юрĕсем айĕнче вилсе выртма лекĕ-ши тесе, вĕсем питĕ хăраса шухăшлаççĕ».

* * *

Калинин облаçĕнчи халĕ нимĕçсенчен ирĕке кăларнă Старое Устиново ялĕнчи çынсем — Д. Е. Алисеев, П. Я. Орлов тата ыттисем те нимĕçсен фашистла оккупацийĕн условийĕсенче совет çыннисене пурăнма çавтери йывăрри çинчен каласа панă. «Нимĕçсен фашистла бандичĕсем,—тесе каланă вĕсем, — колхозниксене пурне те пĕр çын юлмиччен çаратса пĕтерчĕç. Вĕсем ялти мĕнпур çынсене, ачасемпе старикĕсене те, тул çутăличчен пуçласа сĕм тĕттĕм пуличченех çулсемпе укрепленисем тунă çĕрте ĕçлеттереççĕ. Эпир пурте выçă пурăнтăмăр, ĕçлеме пирĕн вăй пулман. Гитлеровецсем çавăншăн писккерĕн хĕнетчĕç. Çавсене эпир мĕн виличченех манас çук. Пирĕн яла нимĕçсем тыткăна лекнĕ 55 красноармееца илсе пычĕç. Вĕсем çав красноармеецсене сарая хупрĕç те выçăпа асаплантарчĕç. Тыткăна лекнĕ 30 çын вара часах выçă вилĕмпе вилчĕ. Ыттисене вилесрен Хĕрлĕ Çар çăлса кăларчĕ, вăл пирĕн яла фашистла пусмăрлăхран ирĕке кăларчĕ».

* * *

Нимĕçсем Венгрире тытса илнĕ çĕршыври пекех хуçаланаççĕ. Гитлер хушнă тăрăх, продовольстви тиенĕ эшелонсене Германие яраççĕ, çав вăхăтрах Венгри халăхĕ выçă пурăнать. Продовольстви памалли пĕчĕк нормăсене нумаях пулмасть тата ытларах пĕчĕклетнĕ. Август уйăхĕн вĕçĕнче Венгрири нумай хуласенче выçă пурăнакан халăхăн демонстрацийĕсем пулса иртнĕ. Земплен комитатĕнче салтак арăмĕсен ушкăнĕ çар ведомствин çуртне çĕмĕрсе кĕрсе кайса çапла кăшкăрнă: «Пирĕн упăшкасене фронтран каялла ярăр», «Вĕсем нимĕçсене тивĕçлипе тыткалаччăр!» тенĕ.

Сентябрĕн 8-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Сентябрĕн 8-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç Сталинградран хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, çавăн пекех тата Новороссийск, Моздок районĕсенче çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинградран хĕвеланăçнерехре хаяр çапăçусем пынă. Н-ски соединени чаçĕсем противникăн атакине сиресире янă. Нимĕçсем çĕнĕ вăйсем илсе пынă та танксем пулăшса пынипе пирĕн оборонăна татма хăтланса темиçе сехет хушши çапăçнă. Гитлеровецсен пур атакисене те сирсе янă. Çапăçу хирĕнче противникăн персе çĕмĕрнĕ 6 танкĕ тата салтакĕсемпе офицерĕсен 200 вилли ытла выртса юлнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем оборонăллă çапăçусем туса пынă. Н-ски часть противникăн темиçе атакине сирсе пăрахнă, нимĕçсен 4 танкне тата гитлеровецсене пĕр рота ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн подразделени çĕрле противник вырăнаçнă вырăна пырса кĕнĕ. Совет боецĕсем румынсен батальонĕн штабне аркатса тăкнă, румын салтакĕсемпе офицерĕсене 80 çынна вĕлернĕ тата боеприпассем тиенĕ 7 автомашинăна сирпĕнтерсе янă.

* * *

Новороссийск районĕнче пирĕн войскăсем противникăн пирĕн оборонăна саваллланса кĕнĕ танкĕсемпе автоматчикĕсене хирĕç хĕрÿллĕн çапăçнă. Н-ски чаçăн боецĕсем артиллерипе минометсенчен персе тата бронебойщиксен вут-çулăмĕпе нимĕçсен 5 танкне, 14 автомашинине тата 400 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Çав участокрах, засадăран сасартăк атакăласа, пирĕн танкистсем тата 7 танк, 17 автомашина пĕтерсе тăкнă, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн чаçсем противникăн шыв урлă каçнă войскисене хирĕç çапăçнă. Танксен ушкăнĕ тата нимĕçсен пĕр батальон ытла пехоти Н-ски часть хÿтĕлекен рубеж çине наступлени пуçласа янă. Пирĕн боецсем тăшмана çывăха янă та, минометсемпе пулеметсенчен персе, гитлеровецсене çĕр çумне лапчăтса хунă. Тăшман çĕнĕрен атака пуçласа яма хăтланнисем пурте пăчланса ларнă. Çав çапăçура нимĕçсен 3 танкне тата гитлеровецсене 2 ротăпа çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн войскăсем халăх пурăнакан пĕр пункта, нимĕçсем çирĕплетнĕскере, йышăнса илнĕ. Оборонăн çав рубежĕшĕн пынă çапăçусенче нимĕçсен 6 танкне, 20 пулеметне, çар пурлăхĕ тиенĕ 10 лавне, 4 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче вырăнти çапăçусем пулса пынă. Старши лейтенант Копасов юлташпа политрук Вотанов юлташ ертсе пыракан автоматчиксем тăшманăн оборонин узелне атакăланă та тытса илнĕ. Тепĕр участокра, артиллерипе минометсенчен персе, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче тыткăна илнĕ нимĕç унтер-офицерĕ Рудольф Своциль çапла каласа панă: «Эпир пысăк çухатусем тÿсетпĕр. Манăн ротăра пĕр çул каялла 200 çынна яхăн пулнă, çавăнтанпа ăна пилĕк хутчен çынсем хушса панă, унăн йышĕ ĕнтĕ пĕтĕмпех çĕнелнĕ. Сентябрĕн 8-мĕшĕнче пулнă çапăçура вырăссем пирĕн полкăн 7-мĕш ротине пĕтĕмĕшпех пĕтерсе

Вĕçĕ 2-мĕш страницăра

Совет Информаци Бюровӗнчен

Сентябрӗн 8-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӗвӗн вӗçӗ

тӑкнӑ. Çав рота вырӑнне 5-мӗш ротӑна янӑ, анчах унӑн кунçулӗ те çавӑн пекех пулса тӑнӑ. Вӑл ротӑран мӗнпурӗ те темиçе салтак çеç тӑрса юлнӑ».

* * *

Ефрейтор Вильгельм Гундхаккер çумӗнче уйӑн ашшӗ Пабнейкирхенран çырнӑ çырӑва тупнӑ. Вӑл çырура çапла калать: «...Нумайӑшӗ Российӑна хирӗç пыракан вӑрçӑ час пӗтес çук тесе шутлаççӗ. Ку ытла та хӑрушӑ япала! Кунта çын сахалланнӑçемӗн сахалланса пырать. Ун вырӑнне кунта çӗнӗрен тыткӑна лекнӗ вырӑс çыннисене, çав шутра нумай хӗрарӑмсене, илсе килёççӗ. Вӗсем пӗри те тивӗçлипе ӗçлесшӗн мар, вӗсем пире мӗнле май килнӗ çапла тавӑраççӗ. Вӗсен куçӗсенче çавтери пысӑк курайманлӑха курсан—питӗ хӑрушӑ пулса тӑрать».

* * *

Орел облаçӗнчи Никифорово ялӗнче нимӗçсен фашистла вӑрӑ-хурахӗсем Мария Петровна Огарева колхозницӑна тытнӑ та ӑна партизансен бази ӑçта вырӑнаçса тӑнине калаçа пама хушнӑ. Совет патриотки вӗсен ыйтӑвӗсене ответлеме килӗшмен. Гитлеровецсем ӑна асаплантарнӑ, анчах та унтан пӗр сӑмах та илтеймен. Тискерленсе кайнӑ бандитсем колхозницӑн аллисемпе урисене çыхнӑ та ӑна сарайне пӑрахнӑ, вара çунтарса янӑ.

* * *

Чех патриочӗсем хресченсенчен тырӑ туртса илсе çӳренӗ гестапо отрядне тапаннӑ та темиçе гитлеровеца вӗлернӗ. Оккупантсем Германие яма тесе хатӗрлесе хунӑ тыррӑн виçӗ складне çунтарса янӑ.

Пирӗн земляксем

Командирӑн связнойӗ

— Çӳç кастармаллаччӗ те, сирӗн парикмахер çук пулӗ?

— Мӗнле çук-ха вара, Анюров питӗ лайӑх пултарать. Ав, куратӑр-и, паян командирпа иксӗмӗре çамрӑклатса ячӗ,—командир çине тӗллесе кӑтартать старши политрук Бобылев. Ун чухне эпӗ Анюрова çӳç кастартӑм.

Уйӑх çурӑ иртсессӗн, эпӗ каллех çак подразделенире пултӑм. Леонид Анюров пирки ыйтса пӗлтӗм.

— Анюров çук-çке ӗнтӗ, питӗ маттурччӗ вӑл...—кулянса ларать рота командирӗ лейтенант Тимофей Ларин.

Наступленине каяс умӗнхи кaç связной хӑйӗн командирӗпе политрукӑн çӳçӗсене касса янӑ.

— Унта сухал хырса ларма вӑхӑт тупӑнмӗ, нимӗçсене хамӑрӑн «Максим» ятлӑ машинкӑпа çине тӑрса «хырмалла» пулать. Ним юлмиччен «хырса» якатса ярӑпӑр вӗсене,—кулса калаçнӑ вӑл.

Пӗррӗмӗш хут наступленине каяканскер, хӑйӗн командирӗнчен пӗр шит те юлман, унпа пӗрлех пынӑ.

— Ан хӑра, манпа пӗрле пыр,—хавхалантарнӑ ӑна опытлӑ командир Ларин.

Тӑшманӑн пралук картийӗ çывӑхне хырӑм тӑрӑх шуса пынӑ вӗсем. Пульӑсем шӑхӑра-шӑхӑра иртнӗ. Пуçа çӗклесе пӑхма та май пулман.

— Взвод командирӗ Занцев патне кайӑр та, пулемет расчечӗсене урӑх вырӑна, маларах куçарма хушӑр,—приказ панӑ командир.

Связной Анюров «по-пластунски» шуса пынӑ. Вырӑнӗ-вырӑнӗпе кӑштах пӗшкӗнсе малалла чупса пынӑ. Унтан каллех хӑвӑрт выртнӑ та, хырӑмпа шунӑ. Хӑраман вӑл. Командир приказне хӑвӑрт пурнӑçа кӗртнӗ.

Нумаях та вӑхӑт иртмен, ӑна стрелковӑй ротӑсене янӑ.

— Анюров тӑрӑшнине пула эпӗ хамӑрӑн пулеметнӑй взводсемпе тата стрелковӑй ротӑсемпе лайӑх çыхӑну тытса пытӑм,—каласа парать лейтенант Ларин.

Связной çапӑçу хирӗнчен аманнисене 12 çынна илсе тухнӑ, çав вӑхӑтрах вӑл командирӑн приказӗсене лайӑх пурнӑçа кӗртсе пынӑ.

Анчах ӑна тӑшман пульлийӗ амантнӑ.

— Питӗ шел, хӑрама пӗлмен тата хӑюллӑ боеца амантрӗç. Час-часах аса илетӗп, унсӑрӑн питӗ кичем мана,—каласа парать лейтенант.

Леонид Анюров наступленине каяс умӗн хӑйне партие илме ыйтса заявлени панӑ. Ӑна ВКП(б) членӗн кандидатне илнӗ.

— Госпитальрен çыру килессе кӗтетпӗр-ха, вара партине илнӗ документсене ярса паратпӑр. Вӑл Чӑваш республикинчи Чкаловски районран. Нимӗçсене хирӗç питӗ маттур кӗрешни çинчен колхозниксене çырупа çырса пӗлтеретпӗр,—тет старши политрук Бобылев.

Анюров командирӑн приказне лайӑх пурнӑçа кӗртсе пынӑ. Çавӑнпа ӑна мухтаççӗ.

Политрук Т. МАЙОРОВ.

Землянсен çырӑвӗсем

15 çулти партизан

М. юлташ отрядӗнче ӑна пурте «ывӑл» тесе чӗннӗ. Вӑл «ывӑл» ятлӑ пулман, унӑн чӑн ячӗ Анатолий, хушамачӗ Зверев пулнӑ. «Ывӑлӑм» тесе чӗннипе çак çамрӑк ачана партизансем хӑйсем чӗререн юратнине палӑртнӑ. Хурçӑ каскӑ тӑхӑннӑскер, хулпуççи çине винтовка, пиçиххи çумне граната çакнӑскер, 15 çулхи Анатолий ватӑ партизансемпе пӗрле çӳренӗ. Ватӑ партизансем, нимӗç çарӗн тылӗнче пурӑнакан совет çыннисем çак çамрӑк ача çине пӑхсан нумайччен тӗлӗннӗ. Анатолий пӗрре те ватӑ партизансене хӑйшӗн куллянма, ӑна хӗрхенме хушман. Совет халӑхӗ нимӗç фашисчӗсене хирӗç çапӑçать, çак çапӑçура çамрӑккисен те хӑйсен тивӗçлӗ вырӑнне йышӑнмалла, тенӗ вӑл.

Анчах та Тольӑн чӑтӑмлӑхӗ нумайлӑха çитеймен. Вӑл 15 çулта кӑна пулнӑ. Çамрӑк ача хӑйӗн винтовки çине те, хӑйпе пӗрле пыракан партизансем çине те темиçе хутчен пӑхса илнӗ, ачалла савӑннӑ, хӑй ыванниле иртерсе яма тӑрӑшнӑ. Вӑл хӑй партизансен отрядне кӗнипе савӑннӑ, çав савӑнӑçа Толя пытарман.

Ӑна отряда илме килӗшмен. «Гольф» шаравар, вӑрӑм чӑлха, берета тӑхӑннӑ çамрӑк ача партизансен отрячӗ çине, кашни партизан çине тивӗçкен йывӑрлӑха тӳсес çук тесе шутланӑ ватӑ партизансем.

Анатолий хӑйне отряда илме тархаслаcа ыйтнӑ. Вӑрçӑн малтанхи кунӗсенче вӑл Лапвире мӗнпӗн курни çинчен, нимӗç захватчикӗсем çине тарӑхни çинчен каласа панӑ. Каллех хӑйне партизансен отрядне илме ыйтнӑ, нимӗç фашисчӗсене вӗсен юнлӑ та тискер ӗçӗшӗн тавӑрма пулӑ. Ыйтсан-ыйтсан ӑна партизансен отрядне илнӗ.

Çав кун уяр та пӑрӑх пулнӑ, пӗлӗт курӑнман. Толя хӑйсенчен инçе те мар темӗскер кӗрлеснине илтнӗ. Вӑл çак сасӑсем тӑшман танкӗсем пулнине лайӑх пӗлнӗ. Танксем уçӑ вырӑна тухнӑ, кашни пункт патне çывхарса пынӑ. Çав танксене малалла кайма чармашкӑн хӑюллӑ çынсене — партизансене чӗннӗ. Çӗр çине çыпçӑнса, симӗс курӑк ӳсӗмӗнче выртнӑ çав хӑюллӑскерсем. Вӗсем шоссе хӗррине выртнӑ. 15 çулхи ача хурçӑ танксем малалла пынине питӗ тимлӗн сӑнанӑ. Танксем 5 пулнӑ. Вӗсем малалла хӑвӑрт пынӑ. Акӑ танксемпе çав виçӗ паттӑр выртакан вырӑн хушши вӗçкелнӗçемӗн кӗçкелсе пынӑ. Тольӑн сылтӑм алли çунакан шӗвек тултарнӑ бутылка майне хытӑ чӑмӑртанӑ.

— Ывӑтма вӑхӑт çитнӗ,—тенӗ партизансенчен пӗри.

Бутылкӑсене танксем çине ывӑтма вӑхӑт çитнине Толя хӑй те сиснӗ. Малти танк Толя патнех çывхарса çитнӗ. Халӗ ӗнтӗ сиксе тӑмалла та ун çине çунтаракан бутылка пӑрахмалла. Кайран пыракан танксем ун çине пеме пуçласси çинчен Толя аса та илмен. Унӑн пӗр шухӑш пулнӑ—тӑшмана малалла кайма памалла мар.

Вӑл вӑхӑтра сиксе тӑнӑ. Танк ун пуçӗ çумӗнчех кӗрлеме тытӑннӑ. Толя бутылкӑна ывӑтать те йӗрсе ярать. Бутылка танка лекмен, Толя йӗрнӗ, Бутылка чул çине пырса ӳксе çурӑлнӑ. Анчах та Толя хӑвӑрт сулахай аллинчи бутылкине сылтӑм аллине тытса танка хӑвалаçа çитсе ун çине ывӑтнӑ. Вӑл куççульне шӑлса чупнӑ, ун хыççӑн пыракан танксем пулеметран пенине вӑл сисмен те. Чупса çитнӗ, сывлӑш çавӑрнӑ, бутылкӑна танк çине ывӑтнӑ, танка çавӑнтах вут хыпса илнӗ. Люка уçса икӗ фашист пуçне çӗкленӗ, вӗсене çавӑнтах партизансен пульли çапса антарнӑ.

Толя хыççӗнчи партизансем ытти танкӗсем çине атака тума хатӗрленнӗ. Фашистла налетчиксем малти танк çуннине курсан хӑйсен машинисене чарнӑ та каялла çавӑрса тарнӑ. Толя чышкине чӑмӑртаса тӑнӑ, партизансем ун çине савӑнса пӑхнӑ.

Тепӗр темиçе кунтан Толя пулман. Ӑна тӑшман мини вӗлернӗ. Шыв урлӑ каçнӑ чухне ӑна тӑшман минин ванчӑкӗ лекнӗ, вӑл партизансен алли çинче вилнӗ. Ӑна икӗ ватӑ йӑмра хушшине васкаса чавнӑ шӑтӑка пытарнӑ. Ӑна пытарнӑ чухне тӑшман минӑсем, пульлисем партизансем тавра ӳкнӗ. Тольӑна тивӗçлӗ чыс тӑваймасӑрах унӑн тусӗсем малалла кайнӑ, анчах та Тольӑн виле тӑпри патне тавӑрӑнма партизансем шута тунӑ. Тупа туни чӑн пулчӗ, халӗ Толя виле тӑпри çине «Анатолий Зверев из Великих Лук, погиб в борьбе за родину, за честь Социалистической страны», тесе çырнӑ хисеплӗ хӑма хунӑ.

Старши политрук Р. ШАШКОВ

Действующи арми.

Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑрту

Маттур хӗрачасем

Иртнӗ çул çак 9 çамрӑк хӗрача шкулсенче вӗреннӗ. Вӗсем ун чухне ӑслӑлӑха вӗренес çул çине тӑнӑ, институт пӗтерсе нумай вӗреннӗ çынсем пулма ӗмӗтленнӗ. Анчах пурнӑç çакна улӑштарнӑ. Вӑрçӑ хыпарӗ, чикӗ хӗрринчи заставӑра тӑшманӑн пӗррӗмӗш снарячӗ ӳксе çурӑлнӑ пекех, шкулсене те сисӗнкӗсӗр пырса çитнӗ. Çак çамрӑк хӗрачасем хӑйсен тӑванӗсемпе çывӑх юлташӗсене фронта ӑсатнӑ, хӑйсем те Улатӑрти паровозсем юсакан завода ӗçлеме пынӑ, унта çӗнӗ ӗçе вӗренме тытӑннӑ. Вӗсенчен тӑваттӑшӗ иквиçӗ уйӑх хушшинчех формовщик специальноçне вӗренсе çитнӗ, 4—5-мӗш разрядсемпе ӗçлеме пуçланӑ. Çамрӑк патриоткӑсем тӑван çӗршыв умӗнчи хӑйсен тивӗçне пурнӑçа кӗртес шухӑшпа тӑрӑшса вӗреннӗ. Ӗçре тимлӗ, дисциплинӑллӑ, пуçарулӑ пулнӑ. Хушнӑ ӗçсене юратса тунӑ.

— Тӗлӗнмелле вӑхӑт, тӗлӗнмелле çамрӑксем,—тет ватӑ производственник Яков Тимофеевич Шелудько юлташ.— Формовщик пулса 20 çул ӗçлетӗп ӗнтӗ. Çак вӑхӑт хушшинче нумай ачасене вӗрентрӗм. Мирлӗ вӑхӑтра формовка ӗçне, çителӗклӗ таранах йывӑрскерне, вӗренсе çитме сахалтан та пӗр çулталӑк кирлӗччӗ. Çак хӗрачасем вӑрçӑ кунӗсенче ӑна 2—3 уйӑх хушшинчех хӑнӑхса çитрӗç.

Яков Тимофеевичӑн сӑмахӗсем пирӗн пурнӑçри чӑнлӑха çирӗплетсе параççӗ. 17 çулхи Нина Тимофеевӑпа Нина Титовӑнах илер. Заводра вӗсем мӗнпурӗ те виçӗ уйӑх çеç ӗçлеççӗ-ха, апла пулин те вӗсем производствӑра ватӑ рабочисемпе танах пыраççӗ, ӗç нормине 170—180 процент тултараççӗ. Кӑтарту хӑми çинче çамрӑк хӗрачасен смени хисеплӗ вырӑн йышӑнать.

Патриоткӑсен çепӗç те çавӑрнӑçуллӑ аллисем детальсене хӑюллӑн тӑваççӗ. Формовка тумалли инструментсем вӗсен аллисенче хӑвӑрт та çӑмӑллӑн улшӑнса тӑраççӗ.

Вӗсен ӗçӗсем çине нумайччен пӑхса тӑрса, мастер мӑнаçлӑн савӑнать:

— Маттур хӗрачасем!

Вӗсен ӗç вырӑнӗсем çавтери таса, инструменчӗсем типтерлӗ вырӑнта.

Çавӑн пекех стахановка Клава Дульевӑпа Аня Дашкова та 2—3 уйӑх каярах çеç ученицӑсем пулнӑ. Халӗ социализмлӑ ӑмӑртура вӗсем пӗррӗмӗш вырӑна тухнӑ. Вӗсем ӗç нормине куллен 150—200 процент таран тултараççӗ.

Çӗнӗ кадрсем вӗрентсе хатӗрлесси— пысӑк ӗç. Вӑл нумай вӑй-хӑват ыйтать. Çак тӗлӗшпе Шелудько юлташ тӑрӑшса ӗçлет.

Т. К.

Хӗрсем станок умӗнче

Ку цехра тӗрлӗ тӗслӗ, тӗрлӗ виçеллӗ детальсем хатӗрлеççӗ. Кашни сехетрех станоксем витӗр темиçе пиншер деталь тухать. Пӗр-икӗ çул каярах ку цехра арçынсем кӑна ӗçленӗ, арӑмсем пулнӑ пулин те, вӗсем е подсобнӑй рабочисем, е подручнӑйсем пулса ӗçленӗ.

Халӗ цехра хӗрарӑмсем те ӗçлеççӗ. Вӗсенчен чылайӑшӗсем отечественнӑй аслӑ вӑрçӑ кунӗсенче килнӗ. Вӗсем хушшинче уйрӑмах 18—22 çулхи хӗрсем чылай. Вӗсен пӗр шухӑш, пӗр ӗмӗт—хӑйсене шанса панӑ станоксем çинче ӗçлесе, ытларах та ытларах лайӑх пахалӑхлӑ продукци туса кӑларасси. Тӑван Хӗрлӗ Çарпа фронта вӗсем çӗршыва валли кирлӗ продукци туса кӑларнипе пулӑшаççӗ.

Циркульнӑй пӑчкаллӑ станок умӗнче 19 çулхи Оля Зубрилина ӗçлет. Ӗлӗкрех вӑл çак цехрах станоксем çумӗнче куçаланса тӑракан детальсене, çӳп-çапсене йӑлтнӑ. Ун чухне унӑн пурте ют пулнӑ. Вӑл станоксем мӗнле ӗçлесе кайна ӗçленине те пӗлмен.

Вӑхӑт нумаях та иртмен. Хӗрача подручнӑй пулса ӗçлеме тытӑннӑ.

— Эпӗ техминимум кружокӗнче вӗренмен, ак çакӑнта станокпа ӗçленине пӑхса тӑнипех вӗрентӗм. Техникӑна алла илме мастер та пысӑк пулӑшу пачӗ,—каласа парать Зубрилина юлташ.

Хастарлӑ хӗрача халь пысӑк ӑсталӑхпа ӗçлет. Кашни кун ун алли витӗр темиçе пин деталь тухать, нормӑна 2—3 хут ирттерсе тултарать. Нумай пулмасть ӑна пӗр йышши васкавлӑ заказ тума пачӗç. План тӑрӑх ӑна, куллен 535 штука туса, 23 сехет хушшинче пурнӑçламаллаччӗ. Зубрилина юлташ ӑна 8 сехет хушшинчех пурнӑçларӗ, урӑхла каласан, вӑл çак кун нормӑна 300 процента яхӑн тултарчӗ.

Клава Ивановӑпа Маруся Семенова производствӑна чернорабочи пулса кӗнӗ. Халӗ акӑ сложнӑй станоксемпе ӗçлеççӗ. Тӗлӗнмелле, нихӑшӗ те пӗр-пӗринчен юлмаççӗ. Иванова юлташ паян икӗ норма тусан, ыран вара Семенова юлташ обязательно икӗ норма ытла тӑвать. Виççӗмӗш кунӗнче вара иккӗшин те результатсем пӗр евӗрлӗрех. Сӑмахран, августӑн малтанхи кунӗсенчен пӗринче Иванова юлташ 7.100 деталь туса, нормӑна 318 процент тултарчӗ. Тепӗр кунхине вара чӑнах та Семенова ытларах çитӗнӳ турӗ.

Çакӑн пек сарӑлса пырать икӗ çамрӑк хушшинчи социализмлӑ ӑмӑрту. Вӑл кашни кун çӗнӗ результатсем парать.

Цехра Зубрилина, Иванова, Семенова юлташсем пек ӗçлекенсем сахал мар. Тӗрӗссипе каласан, станоксемпе ӗçлекенсенчен нормӑна тултарса пырайманнисем пӗрре те çук. Хӑшӗсем ялан нормӑсене икӗ хут ирттерсе тултараççӗ. Çапла ӗçлеççӗ, сӑмахран, Зина Макраполова, Степанида Якосова, Елена Киселева т. ыт. те

Аслӑ çулпуç Сталин юлташ пире кашнинех пӗтӗм ӗçе вӑрçӑ интересӗсемшӗн туса пыма, фронта пулӑшассине куллен вӑйлатса пыма чӗнет. Çакна «Труженик» заводри хӗрсем большевикла ӗçпе ответлеççӗ. Çӗршыва ытларах та ытларах продукци парас тесе вӗсем вӑхӑта пӑхмасӑр, вӑя шеллемесӗр ӗçлеççӗ.

Х. ЛИСИН.

ТУХӐÇЛӐ ӖÇЛЕКЕН БРИГАДӐСЕМПЕ РАБОЧИСЕМ

ÇӖМЕРЛЕ, сентябрӗн 7-мӗш. **(Телефонпа, хамӑр корр.).** Чугунçул транспорчӗ валли вутӑ хатӗрлес ӗç юлашки вӑхӑтра районра 2 хут хӑвӑртланчӗ. Чылай бригадӑсем заданисене кунран кун ирттерсе тултарса ӗçлеççӗ. Швецов юлташ ертсе пыракан бригада касас нормӑна 164 процент, Романов юлташӑн бригади 128 процент, Архипов, Антонов, Назаров тата Макеев юлташсен бригадисем 125 процент тултараççӗ.

Турттаракансен ӗç тухӑçлӑхӗ те нормӑран чылай пысӑк. У. Будова, Митрофанова, Спиридонова, Гордеев, Никитина тата Якимов возчиксем турттарас нормӑна куллен 1,5—2 хут ирттерсе тултараççӗ.

«Хатӗр пул» колхозран пынӑ Поликарповпа Ижетников колхозниксем 2,6-шер кубометр вырӑнне куллен 3-шер кубометр вутӑ хатӗрлеççӗ.

Çамрӑксен Пӗтӗм Тӗнчери XXVIII-мӗш Кунӗ ячӗпе

Çамрӑксен Пӗтӗм Тӗнчери XXVIII-мӗш кунӗ ячӗпе мӗнпур çӗршывра пухусем пулса иртнӗ. Мускавра Горький ячӗпе тӑракан Центральнӑй паркра пулнӑ пухӑва çамрӑксем 10 пин çын пынӑ.

Пухура пулнисем совет халӑхӗн аслӑ çулпуçӗ Сталин юлташ патне салам янӑ.

— Гитлерла мерзавецсене вӗсен тискер ӗçӗсемшӗн тавӑрма паян эпир, хаклӑ Иосиф Виссарионович, Сирӗн умӑрта тата тӑван çӗршыв умӗнче пӗтӗм чун-чӗререн тупа тӑватпӑр. Хамӑрӑн станоксем умӗнче ывӑнма пӗлмесӗр ӗçлеме, ылханлӑ фашистла захватчиксене чарса лартас, çапса аркатса сирсе пӑрахас тесе, фронта хӗçпӑшалсемпе боеприпассем ытларах пама тупа тӑватпӑр, — тенӗ çав саламра.

Армени комсомолецсем Çамрӑксен Пӗтӗм Тӗнчери Кунӗнче хӑйсем вӑрçӑ пуçланнӑранпа тунӑ ӗçсен итогӗсене пӗтӗçтернӗ. Воскресниксенче çамрӑксем 1.870 пин тенкӗ ӗçлесе илсе оборона фондне панӑ. Пионерсемпе шкул ачисем оборона фондне 213 пин хывнӑ. Кӑçалхи 8 уйӑх хушшинче государствӑна тимӗр-тӑмӑрпа эмел курӑкӗсем нумай пухса панӑ.

Ялти комсомолецсем тракторсемпе ытти машинӑсем валли запаслӑ пайсем 200 пин тенкӗлӗх пухнӑ. Шкул ачисем 79 пин çын уйхирсенче тырпул пухса кӗртес ӗçре ӗçлеççӗ.

Хабаровск крайӗнчи çамрӑксем çав куна массӑллӑ спорт ӑмӑртӑвӗсем ирттернипе паллӑ тунӑ.

Хабаровскра «Динамо» обществин шыв станцийӗнче шывра ишес тата кимӗсемпе çӳрес тӗлӗшпе крайри виçӗкунлӑх ӑмӑрту пуçланнӑ. Кӑçалхи программӑна, иртнӗ çулхинчен урӑхлатса, 50 метра çити гранатӑпа ишессине, çар эстафетине, шывра тумтирпе ишессине тата ыт. те кӗртнӗ.

Комсомольскра, Петропавловскра, Николаевскра, Благовещенскра тата крайри ытти хуласенче физкультурниксем çӑмӑл атлетика енӗпе ӑмӑртусем туса ирттереççӗ. Çав ӑмӑртусене пиншер çамрӑксем хутшӑнаççӗ. (ТАСС).

Мобилизациленӗ çынсем лайӑх ӗçлеççӗ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Турханти «Октябрь» колхозра уборка ӗçӗсене мобилизациленӗ çынсем пурте ӗç нормине тултараççӗ. Вӗсенчен уйрӑмах А. Куштанова, Е. Кара, П. Живова т. ыт. юлташсем лайӑх ӗçлеççӗ. Вӗсем ӗç нормине яланах 150 процентран кая мар пурнăçлаççӗ.

Н. ЖАДАЕВ.

Ют çӗршывсенче

Америкӑра пурӑнакан финсем Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем енчен Финляндие хирӗç вӑрçӑ пуçлама ыйтаççӗ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрӗн 7-мӗш. (ТАСС). Америкӑра пурӑнакан финсен «профсоюз членӗсен национальнӑй комитечӗ», Ньюаркра (Нью-Джерси штачӗ) вырнаçса тӑраканскер, США-ри профсоюзсемпе кооперативсем патне Финлянди правительствине хирӗç вӑрçӑ пуçлама чӗнекен резолюци ярса панӑ. Çав резолюцире Финляндин Вашингтонри дипломатиллӗ миссине хупма кирлине тата Финляндие хирӗç вӑрçӑ пуçлама кирлине кӑтартса паракан сӑлтавсене палӑртнӑ тата Финляндия пӗрлешӳ çӗршывсене хирӗç вӑрçнине, Америка суднисене путарнӑ çӗрте Финлянди базисемпе усӑ курнине, Финляндин США-ри дипломатиллӗ миссийӗ тӗнӗл держависене вӑрçӑ тӗлӗшӗнчи информацисене парса тӑнине кӑтартса панӑ.

Асӑннӑ комитет çапла пӗлтерет: финсем йышлӑн тӑракан чылай профсоюзсем çав резолюцие ырланӑ тата ӑна нумайӑн алӑ пусса президент Рузвельтпа государственнӑй секретарь Хэлл патне янӑ.

Мексика парламенчӗ Америкӑри çӗршывсен парламенчӗсене чӗнсе калани

НЬЮ-ЙОРК, сентябрӗн 6-мӗш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Мексика парламенчӗн депутачӗсем Америкӑри мӗнпур çӗршывсен парламенчӗсене, тӗнӗл держависене хирӗç вӑрçӑ пуçласси çинчен калллӗхе пӗлтерменскерсене, чӗнсе калание тӑваллӑн алӑ пуса йышӑннӑ. Çав çырура парламент депутачӗсем Америкӑри мӗнпур çӗршывсене агрессорсене хирӗç пыракан пӗтӗмӗшлӗ кӗрешӗве хутшӑнма тата тӗнӗл держависене хирӗç халех вӑрçӑ пуçласа яма чӗнеççӗ.

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКӖСЕМ КРИТ УТРАВӖ ÇИНЕ ВӖÇСЕ ПЫРСА ТАПӐННИ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрӗн 7-мӗш. (ТАСС) Юнайтед пресс агентстви çапла пӗлтерет: Америкӑн йывӑр бомбардировщикӗсем сентябрӗн 6-мӗш ыран тенӗ чух çӗрле Кания çине (Крит утравӗ) вӗçсе пырса тапӑннӑ. Бомбӑсем çар складчӗсем çине, доксемпе электростанци çине тӳррӗн лекнине палӑртнӑ. Доксен районӗнче нумай пушарсем тухнӑ. Америкӑн бомбардировщикӗсем пурте хӑйсен базисене таврӑннӑ.

АНГЛИПЕ ГЕРМАНИ ХУШШИНЧИ СЫВЛӐШРИ ВӐРÇӐ

ЛОНДОН, сентябрӗн 7-мӗш. (ТАСС). Официальнӑй йӗркепе çапла пӗлтереççӗ: сентябрӗн 7-мӗш ыран тенӗ чух çӗрле Англи бомбардировщикӗсем Хӗвеланӑç Германи çине вӗçсе пынӑ.

Çав çӗрлех противникӑн йышлӑ мар самолечӗсем Англи çине вӗçсе пынӑ, вӗсем çурçӗр-хӗвелтухӑç çыранри районсем çине бомбӑсем пӑрахнӑ. Бомбӑсем пӑрахни пӑртак сиен кӳнӗ. Вилнисемпе аманнисем нумай мар.

Сентябрӗн 6-мӗшӗнче каçхине Англи авиацийӗ Булоньри доксем çине вӗçсе пырса тапӑннӑ. Самолетсем пурте хӑйсен базине таврӑннӑ.

Сентябрӗн 6-мӗшӗнче Çурçӗр Франци çинче туса ирттернӗ операцисенче Англипе союзниксен сывлӑшри вӑйӗсен 400 истребительне яхӑн пулнӑ.

АНГЛИ АВИАЦИЙӖ ДУИСБУРГ ÇИНЕ ВӖÇСЕ ПЫРСА ТАПӐННИ

ЛОНДОН, сентябрӗн 7-мӗш. (ТАСС). Англин авиаци министерствин коммюникинче çапла каланӑ: иртнӗ каç Англи авиацийӗн пысӑк соединенийӗсем Дуисбургри тӗрлӗ объектсем çине тата Рур облаçӗн ытти пунктчӗсем çине вӗçсе пырса тапӑннӑ. Англин разведка тӑвакан самолечӗсем, паян ирхине Рур облаçӗ тӗлӗнче вӗçсе çӳренӗскерсем, иртнӗ каç бомбӑсем пӑрахнӑ вырӑнсенче халӗ те пушарсем çунса выртнине палӑртнӑ.

Англин истребительнӑй авиацийӗ иртнӗ каç нимӗçсем оккупациленӗ территори çинче хӑйсен операцийӗсене туса çӳренӗ.

Çывӑхри Хӗвелтухӑçӗнчи вӑрçӑ ӗçӗсем

ЛОНДОН, сентябрӗн 7-мӗш. (ТАСС). Англин Çывӑхри Хӗвелтухӑçӗнчи командованийӗн коммюникинче çапла пӗлтернӗ: сентябрӗн 5-мӗшӗнче Египет фрончӗн кӑнтӑр участокӗнче противник хӗвеланӑçнелле каялла чакса пынӑ. Хальхи вӑхӑтра противникӑн тӗп группировки Англин минӑсем хурса тухнӑ вырӑнӗнчен татах хӗвеланӑçнерехре тӑрать. Çав вырӑн урлӑ противник август уйӑхӗн вӗçӗнче чакса тухма пултарнӑ. Темӗн пек çине тӑрса кӗрешнӗ пулин те, противник англичансен оборона тумалли тӗп системине пӗр пунктра та шала шӑтарса кӗме пултарайман.

НИМӖÇСЕМ ТЫТКӐНА ИЛНӖ ÇАР ÇЫННИСЕНЕ ПЕРЕ-ПЕРЕ ПӐРАХАÇÇӖ

ЛОНДОН, сентябрӗн 7-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пӗлтерет: Германин Норвегири концентрациллӗ лагерӗнче тӑракан хурал тыткӑна лекнӗ сербсен ушкӑнне персе пӑрахнӑ. Кӑçалхи июль уйӑхӗнче Нарвика тыткӑна лекнӗ çар çыннисене 900 çын ытла илсе пынӑ пулнӑ. Июлӗн варринче концентрациллӗ лагерьте тиф чирӗ пуçланса кайнӑ. Чир нимӗçсен кӳршӗри казармисене те сарӑлнӑ. Нимӗçсем тифпа чирлӗ çынсене пурне те персе пӑрахма приказ панӑ. Çывӑхра пурӑнакан норвежецсем лагерьте винтовка сассисемпе кӑшкӑрнӑ сасӑсем янӑранине çӗрӗпех илтсе тӑнӑ. Çакӑн хыççӑн тыткӑна лекнисене 600 çынна яхӑн баржӑсем çине хӑвалаçа кӗртнӗ те паллӑ мар çӗрелле ӑсатнӑ.

ЕГИПЕТРИ ÇАПӐÇУ

ЛОНДОН, сентябрӗн 5-мӗш. (ТАСС). Англин Çывӑхри Хӗвелтухӑçӗнчи командованийӗ кӑларнӑ коммюникере çапла пӗлтернӗ: сентябрӗн 4-мӗш ыран тенӗ чух çӗрле Египет фрончӗн вӑтаçӗр участокӗнче Англи войскисем противникӑн кӑнтӑр хӗвеланӑçӗнчи позицийӗсене атакӑласа, вӗсене йышӑнса илнӗ. Фронтӑн çурçӗр участокӗнче патрульсем активлӑн кӗрешнӗ. Противник Англи войскисен позицийӗсем çине бомбӑсем пӑрахнӑ тата пулеметсенчен пенӗ. Сентябрӗн 4-мӗшӗнче тӑшманӑн пехотнӑй тата бронетанковӑй чаçӗсем фронтӑн вӑтаçӗр участокӗнчи позицийӗсене, англичансем çӗрле йышӑннӑскерсене, виçӗ хутчен атакӑланӑ. Англи войскисем тӑшманӑн пур атакисене те сирсе пӑрахнӑ. Противникӑн войскисем çине артиллерирен вӑйлӑн персе, тӑшманӑн пехотине йывӑр çухатусем тӳстернӗ. Фронтӑн кӑнтӑрти участокӗнче, Химеймат районӗнче, Англин бронетанковӑй тата куçса çӳрекен вӑйӗсем противникӑн тӗп ушкӑнӗсене малалла хӗссе пынӑ. Противник хӗвеланӑçнелле кӑштах чакнӑ. Кун каçиччен противникӑн танкӗсене чылай пӗтере-пӗтере тӑкнӑ.

ЛОНДОН, сентябрӗн 5-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви Каиртан пӗлтернӗ тӑрӑх, сентябрӗн 4-мӗшӗнче союзниксен войскисем противника кунӗпех малалла хӗссе пынӑ, чылай вӑйлӑ çапӑçусем пулса иртнӗ. Çав çапӑçусене пур тӗрлӗ войскӑсем те хутшӑннӑ. Противник хӗвелтухӑçнелле куçаймасть, çапӑçусем хӗвеланӑç еннелле аталанса пыраççӗ.

Çурçӗр Ирландире „Ирландин республикӑллӑ çарӗн“ членӗсемпе полици хушшинче пулса иртнӗ тытӑçусем

ЛОНДОН, сентябрӗн 7-мӗш. (ТАСС). Август уйӑхӗн вӗçӗнче Бельфастра полиципе «Ирландин республикӑллӑ çарӗ» ятлӑ националистла организаци членӗсен ушкӑнӗ хушшинче тытӑçу пулса иртнӗ. «Ирландин республикӑллӑ çарӗн» членӗсем полицин автомобилӗ çине пеме тытӑннӑ. Çавӑн чухне пӗр полицейскине вӗлернӗ. Тапӑнакансенчен 6-шне тытса суда панӑ. Суд вӗсене вӗлермелли приговор йышӑннӑ. Сентябрӗн 2-мӗшӗнче суд тунисенчен пӗрине — Вильямса вӗлернӗ, ыттисем тӗлӗшпе вӗлермелли приговора урӑх наказанипе улӑштарнӑ.

Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Вильямса вӗлернӗ пирки сентябрӗн 2-мӗшӗнче Бельфастра йӗркесӗрлӗхсем пулса иртнӗ. Бельфаст урамӗсем тӑрӑх полици ларса пыракан броневиксем çӳренӗ, вӗсем тӗрме патӗнче пухӑнса тӑнӑ халӑха сапаласа янӑ. Сентябрӗн 2-мӗш ыран тенӗ чух çӗрле полици хӗçпӑшалсем хунӑ темиçе склада тупнӑ. Çав хӗçпӑшалсем «Ирландин республикӑллӑ çарӗн» пулнӑ. Çавна пула мӗнпур çӗршывра Ирланди националисчӗсенчен нумай çынсене арестленӗ.

Влаçсем мерӑсем йышӑннӑ пулин те, çӗршыври хумханусем чарӑнман. Сентябрӗн 2-мӗшӗнче Бельфаст урамӗсенче Америка машини çине чулсемпе пенӗ. Çурçӗр Ирландири полици управленийӗ çакӑн пек пӗлтернӗ: хӗçпӑшалланнӑ темиçе ушкӑн грузовиксем çине ларса Эйререн Çурçӗр Ирландие каçнӑ та Айрин графствинче полицин машини çине пӑшалсенчен пенӗ. Тапӑнакансем тарса пытаннӑ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Местком Союза работников высшей школы Чувашского с. х. института с прискорбием извещает о преждевременной смерти старшего преподавателя института

Никиты Максимовича МАКСИМОВА,

последовавшей 5-го сентября с. г., и выражает глубокое сочувствие семье покойного по поводу постигшей ее тяжелой утраты.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн — 4—26, пропагандӑпа парти пурнӑç пайӗн — 3—99, ялхуçалӑх пайӗн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11523 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.